Артем Воробьев - ҫамрӑк медик. Каччӑ республикӑри клиника больницин рентгенпа хирурги сиплевӗн уйрӑмӗнче вӑй хурать. И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУн медицина институтӗнчен 2011 ҫулта вӗренсе тухнӑскере федерацин «Земство тухтӑрӗ» программи илӗртмен.

- Пӗрремӗш курсран пуҫласах хула сыватмӑшӗсенче практика тухаттӑм. Унсӑр пуҫне ял-сала больницисенче манӑн специальноҫпа ӗҫ вырӑнӗ тупаймӑн. 2008 ҫулта вӑй илнӗскер пуҫ мимипе чӗре юн тымарӗсене тӗрӗслеме май парать. Чирлине пысӑк технологиллӗ хатӗрсемпе усӑ курса операци тӑватпӑр. Вӗсен пулӑшӑвӗпе пӗҫӗ ҫинче пӗчӗк шӑтӑк тӑватпӑр та пӑрӑхсемпе чӗре патне ҫитетпӗр, - терӗ ҫамрӑк хирург. Артемпа медицинӑра ҫӗнӗлӗхсем пирки мар, ҫамрӑк специалист умне тухса тӑракан йывӑрлӑхсене сӳтсе явма тӗл пултӑмӑр. Ҫак ӗҫе кӳлӗнмешкӗн 6 ҫул ӑс пухнӑ, интернатурӑпа ординатурӑра пӗлӗвне тарӑнлатнӑ чӑваш яшӗсемпе хӗрӗсем Мускава, Питӗре, Хусана ӑнтӑлнине хӑнӑхрӑмӑр ӗнтӗ.

Опыт пухаҫҫӗ те тараҫҫӗ

Федерацин «Земство тухтӑрӗ» программи пулӑшнипе Чӑваш Енри ялсенчи сывлӑх сыхлав учрежденийӗсенче ҫамрӑк врачсен йышӗ хушӑнать. Контракт условийӗсемпе килӗшӳллӗн специалистӑн ялта 5 ҫултан кая мар ӗҫлемелле. Вӗсене ура ҫине тӑма 1 миллион тенкӗ параҫҫӗ, унпа медиксем ҫурт-йӗр тума е туянма усӑ курмашкӑн пултараҫҫӗ. Нумаях пулмасть Федерацин обязательнӑй медицина страхованийӗн фончӗ Чӑваш Ене 18 специалист валли тата 18 миллион тенкӗ уйӑрса памалли заявкӑна ырланӑ. Ҫапла кӑҫал республикӑри ялсенчи медицина учрежденийӗсене ҫамрӑк 104 врач ӗҫлеме пуҫланӑ. Тухтӑрсене ытларах Канаш /26 процент/, Патӑрьел /13 процент/, Шупашкар /11 процент/ районӗсем йышӑннӑ.

Хула сыватмӑшӗсенче юлакан специалистсем программӑна шанаймӗҫ. Тен, вӗсем валли те ҫӑмӑллӑхсем хатӗрлемелле? Акӑ Ҫӗнӗ Шупашкарти ача-пӑча больницинчи лару-тӑру кирек кама та шухӑшлаттарӗ.

- 7 уйӑхра 12 тухтӑр хӑй ирӗкӗпе ӗҫрен хӑтарма ыйтса ҫырчӗ, вӗсенчен 10-шӗ - участокри педиатрсем, - пӗлтерчӗ сыватмӑшӑн тӗп тухтӑрӗ Владимир Зайцев. - Ҫамрӑк 4 специалист «Земство тухтӑрӗ» программӑна хутшӑнчӗ, 2-шӗ Мускава ҫул тытрӗ,

теприсем Шупашкарта ĕç тупрĕç. Педиатрсем тухса кайсан 30 участокран 10-шĕ пушаннă. Вакансисене йышăнма васкамаççĕ. ЧР Сывлăх сыхлав министерстви учрежденири йывăр лару-тăрăва шута илнĕ, 4 интерна янă. Анчах вĕсем сертификат иличчен çулталăк иртĕ. Специалистсем таврăнмасан та пултараççĕ. Сыватмăшăн тĕп тухтăрĕ «таркăнсене» тытса чараймасть. Ĕçе пăрахса каякансем çак утăма шалăвăн пĕчĕк виçипе, пурăнмалли кĕтес çуккипе сăлтавлаççĕ.

- Унччен Совет урамĕнчи общежитире выртса тăмалăх кĕтес уйăраттăмăр та çынсем ĕçлеме юлатчĕç, - сăмахне тăсрĕ Владимир Зайцев. Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш поликлиникăри лару-тăру та савăнтармасть. Учреждение хирургсем çитмеççĕ. Темиçе çул каялла стационарта тăрăшакан тухтăрсем участокра та чирлисене йышăннă. Халĕ медиксем икĕ ĕçре тăрмашмашкăн васкамаççĕ - хирург стаж çухатать. Апла пулин те больница ертÿçисем ыйтăва ĕçе черетленипе татса парасшăн.

Медсестрасен шалăвĕ тата пĕчĕкрех. Спутник хула больницинче нумай çул тăрăшнăскерсем пĕрин хыççăн тепри ыйту çырма пуçланă. Опыт пухнăскерсем Мускава талпăнаççĕ. Вĕсене те тытса чараймăн. Ача-пăча сыватмăшĕн тĕп тухтăрĕ çамрăк специалистсене участоксем тăрăх вырнаçтарма сĕнет.

- Унсăрăн медицина ĕçченĕсен кадр ыйтăвне татса параймăпăр. Тÿлевсĕр вĕреннисем патшалăх хывнă нухрата ĕçлесе татчăр, - терĕ вăл. 40-50 çул тултарнă тухтăрсене улăштарма никам килмест имĕш. Лару-тăру çывăх вăхăтрах лайăхланмасан Çĕнĕ Шупашкар медиксемсĕр тăрса юлма пултарать.

“Миçе уйăх чăтайăп-ши?”

Çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче ЧР сывлăх сыхлав министрĕ Алла Самойлова Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча больницине çитсе курнă. Клиника ĕçĕпе паллашнă май коллективпа тĕл пулнă, çивĕч ыйтусене хуравланă.

«Шалти ĕç миграцийĕ ялан пулнă. Вăл шалу виçинчен те килмест. Тухтăрсемпе медицинăн вăтам персоналне хушма укçапа хавхалантараççĕ. Çапла майпа Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча сыватмăшĕнче вăй хуракан врачăн вăтам ĕç укçи 21907,75 тенкĕпе /Шупашкарти сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсенче - 21699,81 тенкĕ, республикипе илсен

- 22439,42 тенкĕ/ танлашать», - палăртнă министерство сайтĕнче. Ведомство специалисчĕсем Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча больницинчен кайнисем ăçта çул тытнине те ăнлантарнă. 12 тухтăртан 3-шĕ «Земство тухтăрĕ» программăра хутшăнаççĕ, 2-шĕ - Мускаври сыватмăша, 2-шĕ - коммерци организацийĕсене, 5-шĕ Шупашкарти больницăсене вырнаçнă.

Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча больницин сотрудникĕсем палăртнă тăрăх - тухтăрсене пурăнмалли çурт-йĕр çукки кулянтарать. Ăна туянмашкăн вара укçа-тенкĕ самай кирлĕ. Хула поликлиникинче кардиологра вăй хуракан çамрăк тухтăр /медик ята палăртма ыйтмарĕ/ çапла каласа кăтартрĕ.

- Больницăра 3 çул тăрăшатăп. Шалу 6 пин тенкĕпе танлашать. Ĕç кунĕ - 10 сехет. Ман пата çитекенсем - чĕре чирĕсемпе аптăракансем. Киле аран-аран утса çитетĕп. Тус-юлташпа тĕл пулма, савни шырама вăхăт юлмасть. Вĕсем ман пата шăнкăравламаççĕ те. Мĕншĕн? Ирхи 8 сехет тĕлне ĕçе çитетĕп те каçхи 6-7 сехетчен ларатăп. 10-11-ччен выпискăсем çыратăп. Хăшĕ-пĕри евитлет: «Пациентсем укçа парса хавхалантараççех», - тет. Тен, кама-тăр çапла тав тăваççĕ, анчах мана нухрат сĕнекен пулман. Йышăнмастăм та.

Эпĕ 26-ра. Кăвак çÿç пĕрчисем палăрма пуçларĕç. Кашнин сăмахне чĕре витĕр кăларатăп. Карчăксемпе стариксем сывлăх, пенси пирки ÿпкелешеççĕ. Вĕсене пакăлтатма чарас килет, анчах шăппăн итлесе ларатăп. Атте-аннепе пĕрле пурăнатăп. Вĕсене куçран пăхма аван мар. Çывăх çыннăмсем тухтăрсене мухтаççĕ. Текех тÿсеймессе пĕлтертĕм, ĕçтешĕмсем юлма ÿкĕтлерĕç. Миçе уйăх чăтайăп-ши? Калама хĕн. Ирхине вăранатăп та чирлĕ çыннăн йăлăнса тинкерекен куçне куратăп. Эпĕ ĕçрен тухсан пушă вырăна йышăнакана тупма йывăр пулĕ.

Артема Мускав илĕртмест

Артем Воробьев специальноçа килĕштерет.

- Сывалнă çын куллине, тăванĕсен савăнăçне куратăп та хĕпĕртетĕп. Эппин, эпĕ ахаль тăрăшмастăп, - терĕ тухтăр. Сăмах май, Артем студент çулĕсенчех темиçе çын пурнăçне çăлнă. Пĕррехинче пасарта хĕрарăм ÿкнĕ. Пулас медик унăн чĕри хавшанине туххăмрах

ăнланнă. Ăна медицинăн пĕрремĕш пулăшăвне панă, ыратнине чакаракан эмел сĕннĕ. Вăл урамра асфальт çинче выртакансен умĕнчен те иртмест. Вĕсене кура çынна пулăшу кирлипе кирлĕ маррине тавçăрать.

- Пысăк хуласене çул тытакансене ăнланма пулать. Хайхискерсем çак специальноçпах, çак графикпах ĕçлеççĕ, анчах темиçе хут пысăкрах шалу илеççĕ, - терĕ çамрăк хирург. Артем хваттер туянасси пирки ĕмĕтленет кăна. Темиçе çултан вăл кредит илесшĕн. Хальлĕхе унăн пурăнмалли кĕтеслĕ пулмашкăн май çук.

- Çавăнпа çамрăксем çăмăл пурнăç шыраса аякка тухса кайнине ĕнентерекенсемпе сăмах вакламастăп. Хула сыватмăшĕсенчи паянхи лару-тăру - чăнлăхăн сивлек енĕ, - пат татрĕ Артем. Операцисене хутшăнаканскер профессире пысăк йывăрлăхсем курмасть. Çын сывлăхĕшĕн яваплăх туяканскере Мускава, Питĕре, Хусана çул тытма пĕрре мар сĕннĕ. Артем килĕшмен. Тăвай каччи кун вĕçĕнче киле вилесле ывăнса çитсен те ӳпкелешмест. Яш çак профессие ашшĕпе амăшĕ ӳкĕтленипе çеç кӳлĕннĕ. Аслисем ывăлне тухтăра вĕрентесшĕн пулнă. Вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçланнă. Артем палăртни те чăна çаврăнасса шанатăп. Чăваш Енрех вăй хурас кăмăлласкер ĕçтешĕсем пекех ан тартăрччĕ.

**Ольга КАЛИТОВА. «Газета «Çамрăксен хаçачĕ». 2012. 31 августа**.